20-меш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ФЕВРАЛЬ
29
ЫТЛАРИКУН
42(6537) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Чугун çул валли вутă хатĕрлесси— оборонăллă ĕç

Республикăри малта пыракан районсем пур ĕçе те вăхăтра туса пыраççĕ. Вăрнарти вăрман хуçалăхĕн коллективĕпе Шăхасан районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарас умĕн республикăри вăрман ĕçĕнче ĕçлекенсене çакăн пек чĕнсе каларĕç: кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана мартăн 15-мĕшĕ тĕлне пурнăçламалла, чугун çул валли вутă хатĕрлемелли пĕрремĕш çурçулти плана Хĕрлĕ Çар (26 çул тултарнă тĕле, вутă турттармалли плана—мартăн 1-мĕшĕ тĕлне пурнăçламалла терĕç.

Республикăри колхозниксемпе колхозницăсем, çак чĕнĕве хапăл туса йышăнса, хăйсем çине конкретнăй обязательствăсем илнĕччĕ. Шăхасан районĕ хăй çине илнĕ обязательствăна чыслăн пурнăçларĕ. Вăл чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлемелли çулталăкри плана февралĕн 23-мĕшĕ тĕлне 100 процентчен тултарчĕ, паянхи куна планран ирттерсе темиçе çĕр кубометр вутă хатĕрлесе пачĕ. «Свет», «Первое мая», «Заря», Чапаев, Калинин ячĕсемпе тăракан колхозсем вăрман хатĕрлемелли çулталăкри задание илнĕ обязательствăран 20 кун малтан пурнăçларĕç. «Свет» колхозăн план тăрăх 1.412 кубометр вутă хатĕрлемелле пулсан, вăл 1947 кубометр хатĕрленĕ.

Шăхасан районĕн план тăрăх вăрмана ĕçлеме. çуран 195 çын, лашапа 160 çын ямалла пулсан, вăрманта тăтăшах çуран 283 çын, лашапа 270 çын ĕçлеççĕ. Вăрманта комсомолецсемпе çамрăксен фронтовой бригади уйрăмах паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлет.

Çавăн пекех Вăрнарти вăрман хуçалăхĕ те хăй çине илнĕ обязательствăна пурнăçларĕ. Вăл 1943 çулта та чугун çул транспорчĕ валли планран ирттерсе 5.000 кубометр вутă хатĕрлесе панă. Вăрман касакан стахановецсем—Волков, Михайлов, Прохорова юлташсем кулленхи задание 200 процента çити тултарса пыраççĕ.

Анчах пĕтĕмĕшпе илсен, вăрман хатĕрлес ĕç республикăра çителĕксĕр пырать-ха. Кувакино, Шăмăршă, Чкаловски, Тăвай районĕсем вутă хатĕрлесе турттарас ĕçре чăтма çук юлса пыраççĕ. Шăмăршă районĕ (райсовет исполкомĕн председателĕ Михеев) чугун çул валли вутă турттармалли çулталăкри плана февралĕн 25-мĕшĕ тĕлне 30.5 процент кăна пурнăçланă. Çавăн пекех вутă касса хатĕрлес плана та 56,5 процент чухлĕ çеç пурнăçланă. Шăмăршă районĕ февралĕн 15-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче чугун çул транспорчĕ валли вутă турттарассине 0,9 процент, хатĕрлессине 1,6 процент çеç ÿстернĕ.

Чкаловски район (райсовет исполкомĕн председателĕ Самсонов) февралĕн 15-мĕшĕ тĕлне чугун çул валли вутă турттармалли плана 32,1 процент, касса хатĕрлемелли плана 49,5 процент пурнăçланă. Февралĕн 23-мĕшĕ тĕлне ку район турттарас плана 32,2 процент, касса хатĕрлес плана 50,5 процент пурнăçланă. Çапла вара район 8 кун хушшинче вутă турттарассине 0,1 процент, касса хатĕрлессине 1,0 процент чухлĕ кăна ÿстернĕ.

Калас пулать, çав районсен руководителĕсем çак ответлă ĕçе кирлĕ пек ертсе пымаççĕ. Колхозсенчен вăрмана ĕçлеме çынсемпе лашасем кирлĕ чухлĕ ярса тăмаççĕ. Ĕçлеме каякансене лаша апачĕсем 7—8 кунлăх çеç парса яраççĕ, лаша апачĕ пĕтсен, ĕçлекенсем вăрмантан каялла таврăнса, вăхăта усăсăр ирттереççĕ. Килтен 3—4 кун иртсен тин тухса каяççĕ.

ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен уполномоченнăйĕсем вăрмана кашни колхозран миçе çын ĕçleме пынипе тĕрĕслесе тăмаççĕ. Ĕç дисциплини çÿрĕк, хăшĕр чух вăрманта ĕçлекенсем никамран ыйтмасăрах киле таврăнаççĕ.

Тăвай районĕ (райсовет исполкомĕн председателĕ Широв) февралĕн 25-мĕшĕ тĕлне чугун çул валли вутă турттармалли плана 41,0 процент çеç пурнăçланă. Ку районтан вăрмана ĕçлеме çынсемпе лашасем те планран ытлашшипех янă. Планпа вăрманта çуран 125 çын, лашапа 175 çын ĕçлемелле пулсан, çуран 200 çын, лашапа 250 çын ĕçлеççĕ. Апла пулин те, район ку ĕçре юлса пырать-ха. Пĕртен-пĕр сăлтав кунта ĕç тухăçлăхĕ начарри пулса тăрать. Ĕçлекенсем хăйсен кулленхи заданийĕсене те тултарса пыраймаççĕ. Вĕсем валли пурăнма условисем туса паман. Буинскри вăрманпромхоз ку тĕлĕшпе сахал интересленет.

Районсри партипе совет организацийĕсен çакна ăнланса илме вăхăт: чугун çул валли вутă хатĕрлесси—оборонăллă питтех те пысăк ĕç. Вăрман хатĕрлевĕн планĕ—фронт заказĕ пулса тăрать. Вăрман хатĕрлевĕн планне пурнăçласа пырайман район фронтпа çĕршыв умĕнчи тивĕçе пурнăçламанпа пĕрех шутланать.

Вăрман промышленноçĕн рабочисем умне, вăрман ĕçĕнче ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем умне тăван çĕршыв чыслă та ответлă задача лартрĕ: çĕршывна фронта çĕнĕ фабрикăсемпе заводсем тума, тăшман ишĕлтернĕ хуласемпе ялсене юсаса ура çине тăратма çителĕклĕ таран йывăç памалла, чугун çул транспортне пĕр чăрмавсăр ĕçлеттермешкĕн топливо парса тămалла.

Вăрман хатĕрлес ĕçе çак кунсем татса параççĕ, мĕншĕн тесен çул пăсăлас вăхăт, уйтан çураки вăхăчĕ инçе юлмарĕ. Çавăнпа та халĕ вăрманта нихăçанхинчен те хĕрÿ ĕç пымалла.

Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа панă приказра: «Иккĕленмелли çук, совет халăхĕ, фашистла нимĕç захватчикĕсене хăвăртрах тата пуçĕпех çапса аркатас тесе, хăйĕн геройла ĕçĕпе тата хăйĕн мĕнпур вăйне хурса, çĕршывăн производствăллă вăйĕсене таттисыпписĕр ÿстерсе пыма малашне те пулăшса тăрĕ»—тесе каларĕ. Паллах, вăрман ĕçĕнче ĕçлекенсем пĕтĕм вăя хурса тăрăшсан, хăйсен тивĕçне чыслăн пурнăçлĕç. Ку ĕçре партипе совет организацийĕсен вăрман хатĕрлев организацийĕсене, колхозсене кирлĕ пек пулăшса тăмалла, мартăн 15-мĕшĕ тĕлне пур районсен те чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлесе турттармалли плана пурнăçлассишĕн кĕрешмелле. Çавна тума фронтпа çĕршыв хушаççĕ.

ВЛКСМ Центральный Комитетенче

Вăтам тата туллимар вăтам шкулсем 1943 çулта колхозсемпе совхозсенчи ялхуçалăх ĕçĕсенче ăмăртса ĕçленин итогĕсене пăхса тухса, ВЛКСМ Центральный Комитечĕ çапла йышăннă:

1. Кувакино районĕнчи Березовый Майданри туллимар вăтам шкула (директорĕ тата комсомолăн пуçламĕш организацийĕн секретарĕ Барудулина юлташ) ялхуçалăх ĕçĕсенче лайăх ĕçленĕшĕн ВЛКСМ Центральный Комитечĕн Хисеплĕ грамотине памалла тунă.

2. 1943 çулта ялхуçалăх ĕçĕсенче уйрăмах лайăх ĕçленĕшĕн çак шкул отрячĕсене ВЛКСМ Центральный Комитечĕн Хисеплĕ грамотисене памалла тунă:

а) Комсомольскинчи вăтам шкулăн отрядне. Отряд руководителĕ — А. Павлова юлташ. Çав отрядра 23 вĕренекен. Кашни вĕренекен вăтамран 75 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă. Колхозниксем хушшинче агитациллĕ тата культурăллă-массăллă ĕçе лайăх туса пынăшăн райисполком ăна икĕ хутчен премиленĕ.

б) Октябрьски районри Кутемерти туллимар вăтам шкулăн отрядне, Отряд руководителлĕ — Т. Терентьева юлташ. Отрядра 21 вĕренекен. Кашни вĕренекен вăтамран 100 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă.

в) Комсомольски районри Хирти Шептахри туллимар вăтам шкулăн отрядне. Отряд руководителĕ — А. Абрамова юлташ. Отрядра 25 вĕренекен. Кашни вĕренекен вăтамшутпа 108 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă.

Укçапа япаласен лотерейин вылявĕ пулса иртнĕ

Мускавра февралĕн 26-мĕшĕнче укçапа япаласен 3-мĕш лотерейин выльявĕ пулса иртнĕ. Выляв 12 кун пынă. Мĕнпурĕ 3 миллион та 800 пин выигрыш пулнă, 760 миллион тенкĕлĕх. Вăл шутра—50-шар пин тенкĕлĕх выигрышсем 300 пулнă, 25-шер пин тенкĕлĕх выигрышсем —1.200, 10-шар пин тенкĕлĕх выигрышсем—4.800, 5-шер пин тенкĕлĕх выигрышсем 14.000 пулнă. (ТАСС).

Тракторсем валли запаслă пайсем тумалли задание срокчен пурнăçлаççĕ

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри Крочек, Семенов юлташсем ертсе пыракан цехсен коллективĕсем тракторсем валли запаслă пайсем тумалли задание срокчен пурнăçлассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Крочек юлташăн цехĕ ку енĕпе кварталти плана пурнăçларĕ. Суринов, Токарева, Крупская юлташсем çак ĕçре уйрăмах тăрăшса ĕçлеççĕ, вĕсем кулленхи задание 200 процента çити пурнăçлаççĕ.

М. БРИКЕР.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛЕН 26-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 26-мĕшĕнче пирĕн çарсем ПСКОВ хули енче çапла наступлени туса пынă, ПОРХОВ хулипе Ленинград облаçĕнчи НОВОСЕЛЬЕ район центрĕпе пысăк чугун çул станцине, туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра—КОЛЯДУХА, ИВАНОВЩИНА, ЕЛЕВИЦЫ, КРАСНАЯ МАЛАХОВКА, ЯМКИНО, ГУСЛИ, ПОДОКЛИНЬЕ, ПОЛЯНЫ, ЗАХАНЬЕ, ТИМОНОВО.

ХОЛМ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, Калинин облаçĕнчи ЛОКНЯ район центрĕпе пысăк чугун çул станцине тытса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра—ЧИХАЧЕВО, ШИЛОВО, БОЛЬШИЕ ЛЯДЫ, УТЕХИНО, МОРОЗОВО, ПРОКОПИНО, СЕРГЕЕВСКАЯ, СМЕТАНИНО ятлă пысăк ялсем тата ПЛОТОВЕЦ, ЧИХАЧЕВО, АШЕВО, ЛОЗОВИЦЫ, СУЩЕВО, ЗАГОСКИНО, ТИГОЩИ, СТРИМОВИЧИ чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем ДНО хулипе НОВОСОКОЛЬНИКИ хули хушшинчи чугун çула тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатнă.

НОВОСОКОЛЬНИКИ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 60 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра—ВАСИЛЕВО, ПОДДУБЬЕ, ГРЫЖОВО, СУВОРОВО, СУШИНО, МАНУКОВА, УСТРУГИ, ЗАХОДЫ ялĕсем тата МАЕВО, УСТРУГИ чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ.

Февралĕн 25-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 36 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерипе тăшманăн 39 самолетне персе ÿкернĕ.

ФЕВРАЛĔН 27-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 27-мĕшĕнче пирĕн çарсем ПСКОВ хули енче çапла наступлени туса пынă, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 60 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра—ЗАМЕЛЬНИЧЬЕ, ВЕСЦЫ, ЧЕРЕМША, ЗАХОДЦЫ, ЦАПЕЛЬКА, ПОДЛОЖЬЕ, РЫК, КАМЕНКА, ЖАТЕЛЫ, ЩЕРЕПИЦЫ, ГОРКИ, ДУБРОВКА ялĕсем тата МАСЛОГОСТИЦЫ чугун çул станцийĕ.

ХОЛМ хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă, Калинин облаçĕнчи БЕЖАНИЦЫ район центрне туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра—КУЗНЕЦОВА, САМУЙЛИХА, ЗАХОД, ГРИТЬКОВО, МУХРОВО, ДВОРЦЫ, ОЛЕНИНО, ЛУГ ятлă пысăк ялсем.

НОВОСОКОЛЬНИКИ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапла малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 50 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра—КИТОВО, СЕНЮТИНО, БОЛЬШАЯ ЛЕШНА, МАЛАЯ ЛЕШНА, ПРУЖИНЦЫ, СЕНЬКОВО, ВАУЛИНО, ПУСТОШКА ялĕсем тата ЗАБЕЛЬЕ, ПУСТОШКА чугун çул станцийĕсем.

ЛУЦК хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре темиçе кун каярах нимĕçсем Стырь шывĕн хĕвеланăç енчи плацдарма йышăнса тăракан пирĕн çарсене хирĕç наступлени пуçласа янă. Тăшман малтан пирĕн оборона ăшне кăштах савăлланса кĕрсе кайнă, анчах та пирĕн çарсем çавăнтах контратакă сем тунă та нимĕçсене хăйсен малтанхи позицийĕсем çине хăваласа янă, унтан, малалла тапăнса пырса, çĕнĕрен темиçе ял туртса илнĕ. Çав çапăçусенче тăшмана çынсемпе техника енчен пысăк çухатусем кÿнĕ.

АПОСТОЛОВО хулинчен кăнтăрта арахра пирĕн çарсем Николаев облаçĕнчи НОВО-ВОРОНЦОВКА район центрне тата ОСОКОРЕВКА, ФИРСОВКА, ЗОЛОТАЯ БАЛКА, ГАВРИЛОВКА, ПЕТРОВКА, КРЕЩЕНКА, ВЛАДИМИРОВКА ялĕсене тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ.

Февралĕн 26-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фонтсенче нимĕçсĕн 30 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерипе тăшманăн 27 самолетне персе ÿкернĕ.

ПИРĔН САМОЛЕТСЕМ ХЕЛЬСИНКИ ХУЛИНЧИ ÇАРПА ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ОБЪЕКЧĔСЕНЕ ЙЫШЛĂН ВĔÇСЕ ПЫРСА ТАПĂННА

Февралĕн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиацин пысăк соединенийĕсем Хельсинки хулинчи çарпа промышленность объекчĕсене йышлăн вĕçсе пырса тапăннă. Пирĕн самолетсем Хельсинки хулинчи чугун çул узелĕ, çар склачĕсем, çар казармисем тата заводсем çине 10 сехет хушши бомбăсем пăрахнă.

Темиçе вунă пушар тухнă, вĕсем вăйланса сарăлса пырса, пĕтĕм хулана ярса илнĕ. Пуринчен те вăйлăрах пушарсем чугун çул узелĕн, портри складсен, артиллери склачĕсен суднăсем тăвакан верфĕн тата бензохранилище территорийĕсенче пăлăрнă. Пĕтĕм хулана тĕтĕм хупăрласа илнĕ. Çав тĕтĕм çÿлелле 300 метр таран хăпарнă, пушарсенче питĕ вăйлă взрывсем пулнă. Çав пушарсен çулăмĕ пирĕн летчиксем каялла вĕçсе кайнă чухне 350—400 километртан та курăннă.

Пирĕн 3 самолет хăйсен базисене таврăнман.

* * *

Псков хули енче пирĕн çарсем çапла ăнăçлăн наступлени туса пынă. Пĕр районра тăшман, çĕнĕ вăйсем илсе пырса, пирĕн чаçсем малалла куçса пынине чарма хăтланнă. Пирĕн пехота, артиллери вăйлăн пулăшнипе, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та халăх пурăнакан чылай пункта туртса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 800 виллине çити вырта юлнă. Икĕ артиллери батарейине тата миномётсен 4 батарейине тытса илнĕ. Ку батарейăсене нимĕçсем хăйсем пенĕ вырăнтах пăрахса хăварнă. Пирĕннисем çавăн пекех тата снарядсемпе минăсем нумай тытса илнĕ. Совет танкисчĕсем хăйсен танкĕсен гусеницисемпе нимĕçсен 4 туппине тата 6 йывăр миномётне таптаса лапчăтнă, вĕсемпе пĕрлех тупăсемпе миномётсен расчечĕсене те вĕлернĕ.

* * *

Холм хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 100 пункта ытла туртса илнĕ. Нимĕçсем, малтанах хатĕрлесе хунă оборона позицийĕсемпе усă курса тата пур çулсем çине те минăсем лартса тухса, Бежаницы ялне хытă хÿтĕлесе çапăçнă. Совет чаçĕсем тăшмана çавăрса илнĕ те хаяр çапăçу пуçласа янă, темиçе хутчен те ал вĕççĕн тытăçа-тытăçса илнĕ, вара Калинин облаçĕнчи Бежаницы район центрне туртса илнĕ. Нимĕçсен пехотине пĕр полка çити пĕтерсе тăкнă. 15 танк, 23 тупă, 45 автомашина, 7 боеприпас склачĕ тата 6 апат-çимĕç склачĕ туртса илнĕ. Чылай нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Новосокольники хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем фашистла нимĕç захватчикĕсенчен халăх пурăнакан 50 пункта ытла ирĕке кăларнă. Вăл шутра—Пустошка тата Забелье чугун çул станцийĕсем. Пустошкăна нимĕçсем вăйлă çирĕплетнĕ оборона узелĕ туса хунă. Совет боецĕсем гитлеровецсене дзотсенчен хĕссе кăларнă та, пĕр вăхăтрах темиçе енчен те пырса çапса, нимĕç гарнизонне аркатса тăкнă. Çапăçу хирĕнче тăшман виллисем нумай выртса юлнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Тепĕр районра пирĕн автоматчиксем кун каçиччене пĕр вăрманта çапăçнă. Нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Апостолово хулинчен кăнтăрта-арахра пирĕн çарсем тăшмана атакăланă та, унăн окопĕсемпе траншейисен темиçе ретне çĕмĕрсе, Николаев облаçĕнчи Ново-Воронцовка район центрне вăркăнса кĕрсе кайнă. Çав çапăçура гитлеровецсене пĕр батальон ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 4 танк тата хăй тĕллĕн çÿрекен 3 тупă пĕтерсе тăкнă. Ново-Воронцовкăна туртса илнĕ хыççăн пирĕн чаçсем, çитĕнĕве вăйлатса пырса, тата темиçе ял туртса илнĕ. Тăшман контратакăсем тунă, хăйĕн çухатнă позицийĕсене каялла тытса илме хăтланнă. Анчах унăн контратакисем пурте путланса ларнă. Тăшман контратакисене сирсе янă чухне пирĕн çарсем 2.000 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 18 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине çĕмĕрсе тăкнă.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флотĕнчи летчиксем тăшманăн аэродромне ăнăçлă тапăннă. Бомбăсем пăрахса, вĕсем аэродромри 16 нимĕç самолетне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Уксăр пуçне тата аэродром тĕлĕнче пулса иртнĕ сывлăшри çапăçура тăшманăн 2 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Литовец партизанĕсен «Оккупантсене вилĕм» ятлă отрячĕ ансăр чугун çулăн станцине тапăннă. Совет патриочĕсем нимĕçсен хуралне вĕлерсе тăкнă та станцири складсене, 3 паровоз тата темиçе платформа пĕтерсе тăкнă. Адам Мицкевич ячĕпе тăракан партизансен отрячĕ, засадăра ларса, нимĕçсен шоссе çулĕпе пыракан колоннине персе илнĕ. 4 автомашина тата 19 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. 17 винтовка, 6 пистолет тытса илнĕ.

* * *

Хĕрлĕ Çар нимĕçсене Киев хулинчен тапса кăларсан, Гитлерăн Украинăри наместникĕ—пуçкасакан паллă бандит Эрих Кох васкасах Хĕвелтухăç Пруссине тарнă. Хăраса ÿкни иртсе кайсан, çак Кох, Кенигсберг хулинче ларса, Хĕвелтухăç Пруссинче çуралса ÿснĕ нимĕç салтакĕсене. Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче çапăçаканнисене, çĕнĕ çул ячĕпе çыру çырса янă. Анкаминке наместник хăй землякĕсене хăйĕн адресне улăштарни çинчен пĕлтерет. Вара малалла çапла çырать: эпĕ Хĕвелтухăç Пруссине сывлăшран тапăнасран хÿтĕлеме вăйлăн хатĕрленетĕп, шăтăксем тутарттаратăп, пушарсенчен сыхланма уйрăм вырăнсем тата шыв лакăмĕсем хатĕрлеттеретĕп, тет. Унтан вăл хăйĕн ытти ĕçĕсенчи çитĕнĕвĕсем çинчен каласа парать: «Эпĕ çĕнĕ идейăсене пурнăçа кĕртме пултаратăп. Кунта эпĕ ремонт тума çĕнĕ мастерскойсем лартни çинчен кăна каласа кăтартатăп. Çак мастерскойра «кивви çĕнелтĕр» тесе ĕçлеççĕ, çапла вара эпир халăха тумтирпе урана тăхăнмалли атă-пушмаксене хăйсем юсас ĕçрен хăтаратпăр».

Акă мĕнле «идейăсем» хавасланатараççĕ ку кунсенче Эрих Коха. Çакна май иртсе кайнă вăхăтсене астуса илме юрать. Ун чухне çак Эрих Кох ытти «идейăсемпе» вĕçсе çÿретчĕ. 1942 çулхи декабрь уйăхĕнче çак Эрих Кохах хăйĕн фронтри землякĕсем патне çĕнĕ çул ячĕпе янă çырăвĕнче çапла çырнăччĕ: «Эпĕ тытса тăракан Украинăн сарлака хирĕсенче пур нимĕç салтакĕсем валли те çĕр çителĕклех пур. Кам кунта килес тет, кашниех хăй валли вырăн тупĕ. Эсир ку çĕршывăн иксĕлми пуянлăхĕсем çинчен пĕлетĕр... Эсир мана çак тĕлĕшпе шанма пултаратăр: эпĕ Украинăран юлашкине туртса илĕп те, сире тата сирĕн хурăнташăрсене мĕн кирлине йăлтах парăп».

1944 çулта çырнă çĕнĕ çул чĕнĕвĕнче Украинăри иксĕлми пуянлăх çинчен, унта самăр хура çĕрсем çинчен Эрих Кох нимĕн те асăнман вара. Халĕ Эрих Коха сахалли те çитет. Вăл халĕ «çĕнĕ идейăсене» пурнăçа кĕртет, çĕтĕк-çатăк сăран атăсемпе кивĕ йĕмсене саплама мастерскойсем йĕркелет

Фашистла нимĕç захватчикĕсем Украинăри иксĕлми пуянлăхсен хуçисем пулса тăма ĕмĕтленнĕччĕ. Анчах, халăх калашле, пыл-сăра ĕçнĕ те, сухал тăрăх çеç юхнă, çăвара лекеймен. Ĕнтĕ темиçе çĕр пин нимĕç салтакĕ ик-виçшер аршăн Украина çĕрне тупрĕ. Ытти нимĕç ирсĕрĕсем валли те çав ик-виçшер аршăн çĕр тупăнатех.

Подсобнăй хуçалăхсене çуракине тĕплĕн хатĕрлесе çитерер

Çак кунсенче Шупашкарта промышленность предприятийĕсемпе суту-илÿ организацийĕсем çумĕнчи подсобнăй хуçалăхĕсенче ĕçлекенсен канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Канашлу республикăри промышленность предприятийĕсемпе суту-илÿ организацийĕсем çумĕнчи подсобнăй хуçалăхсен 1943 çулхи ĕçĕсен итогĕсемпе 1944 çулхи çуракине хатĕрленсе çитесси çинчен сÿтсе яврĕ. Çак ыйтупа ВКП(б) Обком секретарĕн суту-илÿ енĕпе ĕçлекен заместителĕ Кузьмин юлташ доклад туса пачĕ.

— Виççĕмĕш çул пыракан отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче,— тет докладчик,—пирĕн халăх хуçалăхĕн пур отраслисенче те совет çыннисем çĕнĕрен чаплă ĕçсем турĕç, Хĕрлĕ Çарăн фронтри çĕнтерĕвĕсене тылри производствăра чаплă çитĕнÿсем тунипе тĕреклетсе пычĕç.

Иртнĕ çулта республикăра 486 подсобнăй хуçалăх 11.105 гектар çинче тĕрлĕрен культурăсем акса хăварнă. Подсобнăй хуçалăхсем хăйсен участокĕсенче тухăçлă пахча-çимĕçсемпе тырпул туса илчĕç.

Каплин юлташ ОРС начальникĕ пулса ĕçлекен подсобнăй хуçалăх 1943 çулта гектартан 134 центнер пахча-çимĕç туса илнĕ. Иртнĕ çулта вăл пĕтĕмпе 195,6 тонна çĕрулми кăларнă. Çавăн пекех Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри подсобнăй хуçалăх та тухăçлă тырпул туса илнĕ.

Анчах та пур подсобнăй хуçалăхсем те кирлĕ пек ĕçлесе пынă теме çук-ха. Канашри вагонсем юсакан заводри подсобнăй хуçалăхăн планпа 400 тонна çĕрулми туса илмелле пулнă пулсан, вăл 73 тонна кăна туса илнĕ. Çĕмĕрле районĕнчи промышленность предприятийĕсемпе суту-илÿ организацийĕсенчи подсобнăй хуçалăхсем 130 гектар çинче 4.000 центнера яхăн çĕрулми туса илнĕ. Çапла вара вĕсем гектартан 30-шар центнер çеç çĕрулми илнĕ. Çак фактсем асăннă подсобнăй хуçалăхсенче ĕçлекенсем хăйсен ĕçĕ çине çиелтен пăхни çинчен калаççĕ. Вĕсем акса хăварнă тырпулпа пахча-çимĕçе лайăх пăхса ÿстерессишĕн тăрăшман. Агротехника мероприятийĕсене пурнăçа кĕртмен. Çавна пула вĕсем тырпулпа пахча-çимĕçсем сахал туса илнĕ.

Подсобнăй хуçалăхсенче выльăх-чĕрлĕхсем ĕрчетес ĕç пирки те мухтанмалли ех çук. Канашри вагонсем юсакан заводри подсобнăй хуçалăхăн иртнĕ çулта 130 сысна самăртса пусмалла пулнă, вăл 49 сысна çеç пуснă.

Халĕ мĕнпур подсобнăй хуçалăхсем умĕнчи задача—çуракине большевикла хатĕрленсе ирттересси пулса тăрать. Малта пыракан подсобнăй хуçалăхсем ку ĕçре те лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Якунин тата Челноков юлташсем главнăй инженерсем пулса ĕçлекен заводсенчи подсобнăй хуçалăхсем çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ. Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри подсобнăй хуçалăх уя 430 тонна тислĕк, 360 тонна фекали, 6 тонна минераллă удобренисем кăларнă. Пур культурăсен вăрлăхĕсене те çителĕклĕ таран хатĕрленĕ, 27 центнер çĕрулми тăрри касса пухнă.

Нумай подсобнăй хуçалăхсем акмалли вăрлăхăн 50 процентне çеç хатĕрленĕ. Шупашкарти пир-авăр фабрики çумĕнчи подсобнăй хуçалăхăн нимĕн чухлĕ те вăрлăх çук. Апла пулин те çав ыйтупа кунта никам та интересленмест.

Кăçал подсобнăй хуçалăхсен акмалли çĕр лаптăкĕ нумай ÿсет. Подсобнăй хуçалăх руководителĕсен çуракине ăнăçлăн ирттерес тесе пур майсемпе те усă курса ĕçлемелле.

Агротехникăллă мĕнпур мероприятисене пурнăçласа, кăçал вăйлă тырпулпа пахча-çимĕç туса илессишĕн кĕрешмелле. Вăрлăхсене хатĕрлесе, тасатса хумалла. Туртăм вăйĕпе ĕç вăйне хатĕрлес пирки те халех татăклă ĕçсем тумалла. Подсобнăй хуçалăхсенче ытларах пахча-çимĕç культурисем акса хăвармалла. Рабочисен продовольстви бази хăйсен пулма тивĕçлĕ. Халĕ государство парасса кĕтсе лармалли вăхăт мар. Пур подсобнăй хуçалăхсен те халех çуракине хатĕрленсе çитмелле.

Кузьмин юлташ доклачĕ тăрăх пренире 14 çын тухса каларĕç. Вĕсем подсобнăй хуçалăхсенчи çитменлĕхсене палăртса, кăçалхи çул пĕтĕм ĕçе тĕпренех лайăхлатасси пирки чарăнса тăчĕç.

Юлашкинчен ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Белков юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче подсобнăй хуçалăхсен акмалли çĕр лаптăкĕсене сарнипе пĕрлех, агротехникăн пур мероприятийĕсене те пурнăçа кĕртессишĕн, тырпулсемпе пахча-çимĕçсен тухăçлăхне ÿстерессишĕн, çине тăрса кĕрешме чĕнчĕ.

Унтан канашлу участникĕсем, кăçалхи çуракине ăнăçлăн ирттерме, вăйлă тырпул туса илессишĕн, выльăх-чĕрлĕхсен продуктивноçне ÿстерессишĕн кĕрешме пулса, татăклă обязательствăсем йышăнчĕç.

Çуракине хатĕрленсе çитмелли фронтовой уйăхлăх

Вăрлăх çителĕклĕ хатĕрлесе тасатасси, тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсасси, лашасене çураки валли лайăх хатĕрлесе çитересси—паян тумалли чи ответлă ĕç!

Ӳкерчĕк çинче: Шупашкар районĕнчи «Урожай» колхозăн председателĕ Ф. Ф. ФЕДОРОВА юлташ. Çав колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене туса ирттерес тĕлĕшпе пĕлтĕр малти вырăнсенчен пĕрне йышăннă.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Колхозниксен патриотла ĕçĕ

Совет çыннишĕн Тăван çĕршывран, унăн ирĕклĕхĕпе чысĕнчен хаклли нимĕн те çук. Тăван çĕршывшăн пирĕн халăх нимĕн те шеллемест. Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсене ответлесе, тыл патриотсем çĕршыва мĕн кирлине пурне те параççĕ. Республикăри уйрăм колхозсен кăçал вăрлăхлăх тырă çитменнине шута илсе, колхозсем пĕрне пĕри пулăшассине тата уйрăм колхозниксенчен вăрлăх пухассине организациленĕççĕ.

Комсомольски районри «Трактор» колхоз членĕсем хушшинче ку ĕç анлăн сарăлса кайнă. Колхоз председателĕ Иванова юлташ 4,5 центнер, ферма заведующийĕ Николаев юлташ — 1,5 центнер, колхозник И. Яковлев юлташ — 2 центнер, бригадир Е. Павлова юлташ — 1,5 центнер вăрлăх юнашар колхозсене панă.

Юнашар колхозсемшĕн вăрлăх пухасси малалла та сарăлса пырать.

Колхозниксем вăрлăх параççĕ

ЭЛĔК, февралĕн 28-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Комсомольски районри «Трактор» колхоз председателĕн Иванова юлташăн патриотла пуçарăвне йышăнса, Элĕк районĕнчи колхозниксем хăйсен тыррисене колхозсене вăрлăхлăх параççĕ. «Труд» колхоз членĕсем хăйсен колхозне 100 пăт ытла тырă пухса панă. Çак пархатарлă ĕç ытти колхозсенче те анлăн сарăлса пырать.

М. ФЕДОТОВ,
ВКП(б) Элĕк райкомĕн секретарĕ.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен районри канашлăвĕ

СĔНТĔР. (Телефонпа). Февралĕн 26-мĕшĕнче, Сĕнтĕрте, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу 1943-мĕш ялхуçалăх çулĕн итогĕсемпе çитес çуракине хатĕрленес задачăсем çинчен сӳтсе-яврĕ. Çак ыйтупа ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Я. Петров юлташ доклад туса пачĕ.

Петров юлташ районри колхозсем 1943-мĕш çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене чылай ăнăçлă вĕçленине палăртрĕ. Планпа пăхнинчен ирттерсе 1553 гектар ытларах акнă пулсан та, çураки ĕçне унччен хи çулпа танлаштарсан 12 кун маларах вĕçленĕ. Государство умĕнчи обязательствăсене, 1942 çулпа танлаштарсан, 3 уйăх маларах тултарнă. Унсăр пуçне МТС-а 1944 çулхи ĕçшĕн аванспа тата Хĕрлĕ Çар фондне 10.800 пăт тырă хывнă. Аш-какай обязательствисене те парса татнă, 1942 çулпа танлаштарсан, 9000 пăт ытларах аш-какай панă. Нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсене 700 пуç выльăх ярса панă.

Сталин юлташăн Октябрьти социализмлă революци 26 çул тултарни çинчен тунă докладĕ çине ответлесе, районри колхозсемпе колхозниксем кооперации урлă государствăна 10 кун хушшинче 128.200 пăт тырă сутнă. Колхозниксемпе колхозницăсем вăрçă вăхатĕнче çĕршыв умĕнчи ответлăха туйса ĕçлерĕç, кашни гектартан, районĕпе вăтамран шутласан, 12,2-шер центнер тĕштырă пухса илчĕç.

Район выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне майракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 110 процент, сыснасем енĕпе—122 процент, сурăхсем енĕпе—110 процент тултарнă. Лашасем ĕрчетес енĕпе район республикăра пĕррамĕш вырăн йышăнчĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе колхозсем лайăх ĕçленĕ пулсан та, выльăхсен продуктивноçне ӳстересси юлса пырать. Кашни сăвакан ĕнерен план тăрăх районĕпе вăтамран 1050 литр сĕт суса илме пăхнă пулсан, 850-шар литр çеç суса илнĕ. Колхозсенче çамрăк выльăхсем вилни те пулнă. Челюскин ячĕпе тăракан колхозра иртнĕ çул çамрăк выльăхсен 75 проценчĕ вилсе пĕтнĕ.

Доклад тăрăх пренире 14 çын тухса калаçрĕç. «Красное Сормово» колхозри ферма заведующийĕ Соловьев, «Восток» колхозăн старши конюхĕ Налимов, «Свобода» колхозăн сысна ферминче ĕçлекенĕ Семенов, «Пионер» колхозăн пчеловочĕ Андреянов юлташсем хăйсен паха ĕç опычĕсем çинчен каласа пачĕç.

Сĕнтĕр районĕ Ишлей районĕпе ăмăртать. Канашлура пулнă Ишлей районĕн представителĕ Лазарев юлташ икĕ район хушшинчи 1943 çулхи ăмăртăвăн итогĕсем çинчен каласа пачĕ. Тĕштырă туса илес тĕлĕшпе—Сĕнтĕр районĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе Ишлей районĕ мала тухнă.

Канашлу социализмлă ăмăрту обязательствисене йышăнчĕ. Кăçал тĕш тырă вăтам шутпа кашни гектартан 13,5 центнер, çĕрулми 110 центнер, сӳс-кантăр 4,5 центнер туса илмелле. Çураки ĕçĕсене 7 кунта вĕçлемелле, 4000 гектар çине яровизациленĕ вăрлăх акмалла, кĕрхи калчасене 1000 гектар чухлĕ апат памалла. Вырăнти удобренисем (халиччен кăларнипе пĕрле районĕпе)—уя 100.000 тонна тислĕк, 50.000 тонна торф кăлармалла, 4000 центнер кĕл, 2500 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухмалла. Çак ĕçе фронтовой уйăхлăхра туса çитермелле. Курăксем акас плана пĕтĕмпех пурнăçламалла, 1200 гектар клевер акмалла, ун шутĕнчен 500 гектарне вăрлăхлăх хăвармалла.

Канашлура «Родина» колхоза тырпул лайăх туса илнĕшĕн, «Çĕнĕ Юнга» колхоза выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе лайăх пурнăçланăшăн ВКП(б) Райкомĕпе Райисполкомăн куççа çӳрекен Хĕрлĕ Ялавĕсене пачĕç. Канашлура пулнă 23 çынна «Отличник социалистического земледелия» значокпа наградăларĕç.

М. КАРПОВ,
Т. ИВАНОВ.

Çуракине хатĕр

ОКТЯБРЬСКОЕ. Ильменкассинчи «Молния» колхоз иртнĕ çул агротехника мероприятийĕсене пурне те вăхăтра пурнăçларĕ. Çураки ĕçĕсене ăнăçлăн туса ирттерчĕ. Çавăнпа та унăн çуртырисем пачар мар пулчĕç. Кашни гектартан 70—112-шер пăт тырă пухса илнĕ.

1944 çулта вăйлăрах тырпул туса илессишĕн «Молния» колхоз членĕсем ырми-канми ĕçлеççĕ.

Лайăх вăрлăх ,уйăрса, ăна сортласа хунă. Вăрлăхăн шăтас пахалăхĕ 95—99 процент шутланать. Ăна бригадирсем тĕрĕслесех тăраççĕ. Часчасах вăрлăх мĕнле выртнине колхоз председателĕ О. Кузнецова юлташ та пырса тĕрĕслет.

Çуракинче кирлĕ ялхуçалăх инвентарне: 12 плуг, 2 сеялка, 16 сӳре юсаса, уйрăм сарайсене вырнаçтарса лартнă. Çавăнпа пĕрлех вăрлăхсем тыткалама 45 михĕ хатĕрленĕ.

Уя 1310 лав ытла тислĕк кăларнă, 15 центнер кĕл, 15 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ.

Колхозăн ĕç лашисем 23. Конюхсем лашасене аван пăхаççĕ. Ку ĕçре уйрăмах Г. Хлебнов, Ф. Хлебников юлташсене ырлама тивĕçлĕ. Вĕсем пăхакан лашасем пурте мăнтăр та таса.

— Эпир çак çитĕнӳсемпе лăпланса лармастпăр. Хамăрăн ĕçе татах та татах тĕрĕслетпĕр, çитменлĕхсене пĕтеретпĕр, — тет колхоз председателĕ О. Кузнецова юлташ.

Вăкăрсене кӳлме вĕрентеççĕ

ИШЛЕЙ. Шурча ялсоветĕнчи «Самолет» колхозра виçĕ вăкăра ĕçе вĕрентрĕç. Халĕ вĕсемпе уйхире тислĕк, ферма валли выльăх апачĕ турттараççĕ.

Çитес кунсенчех колхозри çамрăксем тепĕр вăкăра вĕрентсе çитереççĕ. Ку ĕçре С. Сорокинпа Н. Сорокин юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

А. СМИРНОВ.

Ӳкерчĕк çинче: Йĕпреç МТС-ĕн чаплă комбайнерĕ П. М. Маркиянов юлташ. Вăл тракторпа тумалли ĕçсен планне 154 процент, комбайнпа вырмалли плана 370 процент тултарнă.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сем ТРАКТОРСЕНЕ ЮСАМАЛЛИ ПЛАНА 1944 ÇУЛХИ ФЕВРАЛĔН 25-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

МТС-сем	Пугĕ юсанă (процентпа)	Февраль уйăхĕнчи плана тултарнă (процентпа)
Шăхасан	107,1	40,0
Комсомольски	100,0	50,0
Красноармейски	100,0	—
Йĕпреç	100,0	75,0
Ишлей	100,0	84,6
Елчĕк	100,0	300,0
Шупашкар	100,0	42,8
Вăрнар	92,4	100,0
Куславкка	86,9	100,0
Элĕк	84,0	100,0
Сĕнтĕр	80,8	66,6
Сĕнтĕрвăрри	76,0	80,0
Çĕмĕрле	73,0	50,0
Первомайски	72,0	60,0
Етĕрне	71,7	65,5
Чкаловски	71,1	54,5
Шăмăршă	69,4	37,5
Канаш	67,9	25,0
Сĕрпӳ	67,7	50,0
Вăрмар	66,8	90,0
Кувакино	64,9	66,6
Тăвай	60,0	200,0
Улатăр	56,9	56,2
Хĕрлĕ Чутай	52,1	25,0
Пăрачкав	48,8	86,6
Пĕтĕмпе:	77,2	71,7
Февралĕн 20-мĕшĕ тĕлне пулнă	75,2	61,5

Кашни колхозрах тĕплĕн шухăшласа тунă производство планĕ пулмалла

Колхозниксемпе колхозницăсем халĕ хĕрсех çуракине хатĕрленеççĕ. Производство планне тăвасси çуракине хатĕрленес ĕçĕн уйрăлми пайĕ пулса тăрать. Производство планĕпе пĕрлех расходсемпе приходсен сметине те тумалла.

Халĕ, вăрçă пынă вăхăтра, пур енчен те тĕплĕн шутласа тунă производство планĕ ялхуçалăх ĕçĕнче пысăк вырăн йышăнать. Вăл кашни колхоз аслă вăрçа мĕнле хутшăннине кăтартса паракан документ пулса тăрать. Производство планĕ колхозниксемпе колхозницăсен патриотизмлă тĕп задачине — çĕршывпа фронт валли ытларах тĕштырă, çĕрулми, пахча-çимĕç, аш-какай тата ытти ялхуçалăх çимĕçĕсем туса парас задачине татса пама пулăшмалла.

Иртнĕ çул производство планне тăвассине нумай колхозсем кая хăварчĕç. Çураки пуçланнă тĕле колхозсенчен 15 проценчĕ производство планне туса ĕлкĕртменчĕ. Производство планĕсене тăвас ĕçре Тăвай, Куславкка, Шăмăршă тата Çĕмĕрле районĕнчи колхозсем уйрăмах юлса пычĕç. Анчах иртнĕ çулхи йăнăшсене кăçал та колхоз руководителĕсем пурте тивĕçлĕ пек шута илмесçĕ-ха. 1944-мĕш ялхуçалăх çулĕнче мĕнле ĕçсем тумалли çинчен чылай колхозсенче сӳтсе-явма халĕ те тытăнман.

Тырпул туса илмелли тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли тĕп заданисен малтанхи цифрисене кашни районах пĕлтернĕ. Вĕсене райçĕрĕç пайĕсем кашни колхоз патне çитернĕ. Анчах та производство планĕсене тăвас ĕçе нумай колхозсенче пуçăнман-ха. Малта пыракан колхозсенче кăна производство планĕн тĕп заданийĕсене звеносен, бригадăсен тата колхозниксемпе колхозницăсен пухăвĕсенче сӳтсе-явнă.

Производство планĕн чи паха ыйтăвĕсенчен пĕри вăл колхозăн акмалли çĕр лаптăкне тĕрĕс пайласа вырнаçтарасси пулса тăрать. Иртнĕ çул çак чи кирлĕ ĕçе çураки пынă вăхăтра турĕç. Çавна пула вара нумай колхозсенче агротехникăн паха ыйтăвне—кашни культурăна акмалли вырăна пĕлсе уйăрассине пăсрĕç, малтанхи çул пĕр-пĕр вырăнта мĕнле тырă пулнине шута илмесĕр акрĕç. Çакăн пирки уйрăм колхозсенче тырпул тухăçлă пулмарĕ. Хăш тырра ăçта акассине кашни колхозра малтанах шухăшласа хумалла, çак ĕçе агронома явăçтармалла. Кашни бригадăпа звенона тырпул туса илмелли уйрăм заданисем памалла.

Производство планне тунă чухне туртăм вăйне мĕнле вырнаçтарса йĕркелесси çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхмалла, колхозри пур тĕрлĕ туртăм вăйĕпе те туллин усă курмалла тăвас пулать. Ĕç лашисемсĕр пуçне вăкăрсемпе, хĕсĕр юлнă ĕнесемпе усă курассине те шута илмелле. Колхозра МТС тракторĕсем ĕçлемелле пулсан, вĕсене хăш участокра ĕçлеттерессине малтанах палăртмалла, вĕсемпе чи йывăр ĕçсем тăвассине, сăмахран, тарăн сухалассине, авăн çапассине палăртса хумалла.

Производство планне тунă чухне ĕç вăйне тĕплĕн шута илмелле, ĕç вăйĕпе ăçта тата мĕнле усă курмаллине пĕлсе палăртмалла.

Ĕç тухăçлăхне ӳстерессине ĕçшĕн тӳлессине тата ĕç нормисене халиччен çирĕплетнĕ йĕркерен улăштарнă пулсан, вĕсене колхозниксен пухăвĕсенче пăхса тухмалла тата вĕсене колхозăн кашни членне е ĕçе хутшăнакан кашни çынна пĕлтерсе хумалла. Сăмахран кăçал майракаллă шултăра выльăхсемпе ĕçлеме тивет. Вĕсемпе ĕçлекенсен ĕç тухăçлăхĕ мĕнле пулмаллине тата вĕсене мĕнле тӳлемеллипе халех татса хумалла. Паллах ĕнтĕ, пĕр пек ĕçре майракаллă шултăра выльăхсемпе ĕçлекенсен ĕç тухăçлăхĕ лашасемпе ĕçлекенсенчен каярах пулать, анчах та майракаллă шултра выльăхсемпе ĕçлекенсене (ку ĕç çеннине асра тытса) ĕçкунĕ ытларах та пама юрать.

Колхозăн производство планне тунă чухне, организациллĕ ĕçсен пайĕнче, колхозри производствăллă едиинцăсене—бригадăсене яланлăха çирĕплетессине асра тытмалла. Бригадăра опытлă сухаçăсем, акакансем тата квалификациллĕ ытти кадрсем пуррине те пăхса тухмалла. Бригадăра çын çитмесен, вĕсене ытти ытла пахах мар ĕçсенчен илсе хушса памалла. Бригадăсене пысăклатмалла мар, мĕншĕн тесен пĕчĕкрех бригадăсем колхоз ĕçĕнче лайăхрах ĕçлеççĕ.

Колхозри бригадăсене çирĕплетес ĕçре çынсене звеношарăн уйăрса ĕçлеттерни паха тĕслĕх кăтартрĕ. Звеносем пурнăçлă пулччăр тесен, ăна бригада членĕсенчен, хăйсен ирĕкĕпе пĕрлешнĕ çынсенчен тумалла, вĕсене çĕр участокĕ çирĕплетсе памалла, звено членĕсем хушшинче организациллĕ ĕç туса пымалла. Кашни бригадăра халех шăпчăклă çынсенчен лашапа ĕçлекенсене уйăрмалла, вĕсене кӳлмелли, инвентарь — сӳсмен, хăмăтсем, йĕнерчĕксем тата ытти ут таврашĕсем те çирĕплетсе памалла.

Производство планне тунипе пĕрлех, колхоз правленийĕн приходпа расход сметине тумалла. Ку вара—питĕ паха та ответлă ĕç пулса тăрать. Ăна тунă чухне тĕп никĕсе производство планне хумалла. Укçа ăçтан кĕмеллине тата укçана ăçта расходламаллине тĕрĕс пăхмалла. Приходпа расход смети колхозри производство планĕн уйăрлми пайĕ, вăл производство планĕпе пăхнă мероприятисене укçа-тенкĕ парса тăракан çăлкуçĕ пулса тăрать.

Производство планне тата приходпа расход сметисене тăвас ĕçе колхозниксен анлă массине явăçтармалла, вăл ĕççене тăвассине колхоз правленийĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсен кирлĕ пек ертсе пымалла. Производство планне сӳтсе-явнă май колхозăн мĕнпур членĕсене пысăк тухăçлă тырпулшăн кĕрешме мобилизацилемелле.

Колхозсен производство планĕсене тата приходпа расход сметисене тăвасси ялхуçалăх ĕçĕ кăна мар, вăл вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчен пысăк вырăн йышăнса тăракан ĕç, çавăнпа та ăна тунă чухне райçĕрĕç пайĕсен кашни колхоза конкретно ертсе пымалла, кашни колхозăн планне çĕрĕç пайĕнче тĕрĕслесе, пăхса тухмалла. Çак ответлă ĕçе пур колхозсенче те сывăх вăхăтрах туса пĕтермелле.

Кашни колхозăн пур енчен те паха тата ăнланмалла тунă производство планĕ, приходпа расход смети пултăр. Вăл — колхозăн пысăк тухăçлă тырпулшăн, çĕрулмишĕн, пахча-çимĕçшĕн, аш-какайшăн тата ытти ялхуçалăх çимĕçĕсемшĕн кĕрешмелли программа пулса тăтăр.

И. КОСМИНСКИЙ,
Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн планпа финанс пайĕн начальникĕ.

Ют çĕршывсенче

„Хĕрлĕ Çарăн вилĕмсĕр хастарлăхĕ"

КАНАДА ХАÇАЧĔ ХĔРЛĔ ÇАР 26 ÇУЛ ТУЛТАРНИ ÇИНЧЕН

ОТТАВА, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Канадăри «Ситизен» ятлă хаçат Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа уместатья пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: «Пĕтĕм тĕнчери демократиллĕ çĕршывсем Хĕрлĕ Çарăн вилĕмсĕр хастарлăхне тивĕçлипе хаклаççĕ». Германире çар вăйне хисеплеме ăруран ăрăва вĕрентсе пынă пулин те, Хĕрлĕ Çар руководителĕсем вăрçă операцийĕсене Германин çар руководствинчен лайăхрах организацилеме пĕлеççĕ. Совет системи, унăн шултăра промышленноçĕ тата вырăс халăхĕн çапăçури хастарлăхĕ Хĕрлĕ Çар çитĕнĕвĕсен çирĕп никĕсĕ пулса тăраççĕ. «Халăх демократишĕн, унăн малашнехи кунçулĕшĕн пыракан çапăçура, — тенĕ статьяра,—Хĕрлĕ Çар туса пыракан çĕнтерӳсенчен мухтавлă ĕç урăх çук».

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй ставки çапла пĕлтерет: тăшман атакăсем чылай тунă, союзниксен çарĕсем атакăсене пурне те сирсе янă.

Авиаци тăшманăн Пара тата Пола гаванĕсене, Грац патĕнчи аэродрома (Австри), Фиумри портпа чугун çул станцине атакăланă.

Февралĕн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен самолечĕсен пысăк мар соединенийĕсем каллех Штейрти авиаци завочĕ çине бомбăсем пăрахнă, ытти соединенисем çаплах тăшманăн Далмацире тата Римран çурçĕртерехре пĕр çĕре пухăнса тăнă çарĕсемпе автотранспорчĕ çине бомбăсем пăрахнă. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 93 самолетне персе ӳкернĕ. Союзниксен 44 самолечĕ хăйсен базисене таврăнман.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтереççĕ: февралĕн 25-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англин бомбардировочнăй авиацийĕн самолечĕсем каллех пин вĕçӳ ытла тунă. Бомбăсене пуринчен те ытларах Швейнфурт çине пăрахнă. Ку хулана çĕр каçиччен икĕ хутчен тапăннă. Унсăр пуçне тата Сурçĕр-хĕвеланăç Германири ытти объектсем çине те бомбăсем пăрахнă. Акăлчансен 35 самолечĕ хăйсен базисене таврăнман.

Февралĕн 25-мĕшĕнче ирхине Çурçĕр Францири çар объекчĕсене атакăланă.

Февралĕн 24-мĕшĕнче Американецсен бомбардировщикĕсем çĕнĕрен Штейртя (Австри) Штейр-Даймлер заводне тапăннă. Америка бомбардировщикĕсен ытти соединенийĕсем Фиумри нефть тасатакан заводсене атакăланă.

ЛОНДОН, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен питĕ пысăк соединенийĕсем Германие тапăннă. Пуринчен те вăйлăрах Аугсбург хулине тапăннă. Ăна çĕр каçа икĕ хутчен пырса питĕ хаярран атакăланă. Аугсбург хули вăл авиамоторсем тата подводнăй лодкăсем валли двигательсем туса кăларакан промышленноçăн паха центрĕ пулса тăрать. Малтанлăха илнĕ хыпарсем тăрăх, тапăну питĕ ăнăçлă пулса иртнĕ.

«Москито» йышши самолетсем Кăнтăр-Хĕвеланăç Германири, Бельгири тата Голландири чылай обьектсене атакăланă. Çав мĕнпур операцисенчен акăлчансен 24 самолечĕ каялла таврăнман.

ГЕРМАНИ САМОЛЕЧĔСЕМ АНГЛИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра официально çапла пĕлтернĕ: февралĕн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле нимĕç самолечĕсем Лондон районĕ çинче, шалти графствăсем çинче тата Кăнтăр-хĕвелтухăç Англи çинче пулнă. Лондон районĕнче бомбăсем пăрахса сиен кӳнĕ. Вилнисемпе аманнисем пур. Ытти пунктсенче сиен пысăках мар, вилнисемпе аманнисем те нумай мар. Тăшманăн 10 самолетне персе ӳкернĕ.

АНГЛИПЕ АМЕРИКА АВИАЦИЙĔН ГЕРМАНИПЕ ÇУРÇĔР ЕВРОПА ÇИНЧЕ 1943 ÇУЛТА ТУНĂ ÇУХАТĂВĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин авиаци министрĕ Синклер общинăсен палатинче çапла каланă: пĕлтĕр Германипе Çурçĕр Европа çинче Англи авиацийĕн 2.369 бомбардировщик, Америка авиацийĕн 997 бомбардировщик пĕтнĕ, çак бомбардировщиксен бази Англире пулнă. Çак çулхи январьте Англи авиацийĕн 319 бомбардировщик, Америка авиацийĕн 178 бомбардировщик пĕтнĕ.

МАРШАЛЬ УТРАВĔСЕМ ÇИНЧЕ ЯПОНИН ИКĔ ГАРНИЗОНĔ ПĔТНĔ

ТОКИО, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Япони çарĕсен январĕн 30-мĕшĕнчен пуçласа союзниксен Квадьелини Илуотт утравĕсене хирĕç (Маршаль утравĕсем) атака пуçласа янă пысăк вăйĕсемпе çапăçнă. Февралĕн пĕррремĕшĕнче çав утравсем çине союзниксем çар антарнă хыççăн çапăçусем унта татах та хаярланса кайнă. Çав çапăçусенче Японин 4.500 çынран тăракан çарĕ пĕтĕмпех пĕтнĕ. Çав икĕ гарнизонăн командующийĕсем Ямада тата Акияма контрадмиралсем те вилнĕ.

ЮГОСЛАВИРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЖЕНЕВА, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС) Югославирен çитнĕ хыпарсем тăрăх фронтăн пур участокĕсенче те халăха ирĕке кăларакан çар чăçĕсем оккупантсемпе тĕллĕн-тĕллĕн çапăçаççĕ. Партизансен пĕр отрядĕнчи боецсем Любляна Триест чугун çул çинче нимĕçсен поездне пĕтерсе тăкнă. Çак чугун çул çинче поездсем вара икĕ кун хушши çӳреме пултарайман.

ЖЕНЕВА, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, Югослави халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн 29-мĕш дивизийĕн чăçĕсем февралĕн 24-мĕшĕнче Гацкоран Билечи еннелле татса кĕрсе кайнă нимĕçсемпе хытă çапăçнă. 100 гитлеровеца вĕлернĕ, 150 гитлеровеца амантнă.

Соколацпа Рогатица секторĕнче хаяр çапăçусем пынă. Тăшманăн кунти чăçĕсене пулăшма çĕнĕ вăйсем пырса çитнĕ. Çĕрлехи çапăçура тăшман колоннине аркатса тăкнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă тата разведка тунă.

ЮГОСЛАВИРИ ПАРТИЗАНСЕМ БРАЧ УТРАВНЕ ЙЫШĂННА

ЖЕНЕВА, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, Югослави партизанĕсем Брач утравĕ çине пырса аннă. Вăл утрав Адриатика тинĕсĕнче, Сплит хулинчен кăнтăртарахра. Вĕсен десанчĕ утравăн хĕвеланăç пайĕнче, Милна хули сывăхĕнче аннă. Ĕç ăнăçлă пулса иртнĕ. Утрав çинче тăпă нимĕç чăçĕсене пысăк çухатусем кӳнĕ.

США СЕНАЧĔ НАЛОГСЕМ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ЗАКОНОПРОЕКТА ÇĔНĔРЕН ЫРЛАНĂ

ЛОНДОН, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, США сеначĕ налогсем çинчен калакан законопроекта çĕнĕрен ырланă. Президент Рузвельт, çак законопроекта чарса лартса, февралĕн 22-мĕшĕнче ăна каялла конгреса тавăрса панăччĕ. Халĕ çав законопроектшăн сенатра 72 сасă панă, хирĕç 14 сасă пулнă. Кунччен пĕлтернĕ тăрăх, çав законопроекта февралĕн 24-мĕшĕнче США-н представительсен палати те çĕнĕрен ырланă. Çапла вара налогсем çинчен калакан законопроект халĕ закон пулса тăнă.

США-н ЮСТИЦИ МИНИСТЕРСТВИ ИСПАНИРИ ФАЛАНГА ÇИНЧЕН

ВАШИНГТОН, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). США-н юстици министрĕ Биддл çапла пĕлтернĕ: эпĕ Испани фалангистне Фернандеса Америка гражданĕсен шутĕнчен кăлармашкăн суд ĕçĕ пуçласа ятăм, тенĕ. Фернандес вăл 1942 çулта Америка гражданĕ пулса тăнă. Биддл тата заявлени пичетлесе кăларнă, çав заявленире вăл Испанири фаланга «Италири фашистсен тата Германири нацистсен партийĕсем» йышши парти пулса тăрать, тесе каланă.

Биддл çапла каланă: Фернандес ĕçĕ фалангăра тăнă пирки Америка гражданĕсен шутĕнчен кăлармалли пĕрремĕш ĕç пулса тăрать. США правительстви ытти фалангистсем тĕлĕшпе те çавăн пекех тума шутлать, тенĕ.

ВЛАÇСЕНЕ ТЫРĂ ПАМАН 300 ФИНН ХРЕСЧЕННЕ СУД ТУНИ

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Финляндин «Карьяла» ятлă хаçачĕ Кăнтăр Финляндири 300 хресчене пĕр харăс суд туни çинчен çырса пĕлтерет. Вĕсене государствăна пама хушнă тĕштырăн мĕн пурĕ те 10 процентне яхăн кăна панă, тесе айăпланă. Хаçат çапла çырать: хресченсем хăйсен тыррине закона пăхăнмасăр çапса илеççĕ, тет. Унтан çав хаçат айăпланакан хресченсене вĕсем «пĕр хăйсемшĕн кăна тăрăшаççĕ» тесе вăрçать, финсен контроль органĕсене хресченсен ĕçĕсем çине либералла пăхнăшăн ятлать. Вĕсем çапла ĕçленипе пула, хресченсем тĕштырă парассинчен пăрăнса юлаççĕ, тет.

КĔСКЕН

● Оксфорд университетĕнче (Англи) вырăс кафедри уçăлать.

● Февралĕн 22-мĕшĕнче Пуна хулинче (Инди) Ганди арăмĕ вилнĕ. Вăл 74 çулта пулнă, çак вăхăтра вăл 18 уйăх хушши тĕрмере ларнă. (ТАСС).

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00351 Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. [illegible] 42 п. л. Тираж 11.200 экз.